РФ Пенси фондĕнчен пĕлтереççĕ

# Ĕç пенсийĕн страхланă пайĕ ӳсрĕ

***Раççей Федерацийĕн Правительстви 2009 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнче 611-мĕш номерлĕ йышăну турĕ. Унта сăмах ĕç пенсийĕн страхланă пайне ӳстерессипирки пырать.***

2009 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса ватлăха, инвалида тухнине тата çемьере тăрантаракан вилнине пула паракан ĕç пенсийĕсен страхланă пайĕ 7,5 процент ӳсрĕ. Тĕрĕссипе пенсисен виçисене çулталăк пуçланнăранпа 3 хутчен ӳстерчĕç. Кăçал пĕрремĕш хут пенсисене индексацилесси мартăн 1-мĕшĕнче пулчĕ – ĕç пенсийĕсен база пайĕ 8,7 процент ӳсрĕ. Апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вара ĕç пенсийĕсен страхланă пайĕ 17,5 процент хăпарчĕ.

Кăçалхи августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенси виçисене хăпартса пани ĕç пенсийĕ илсе тăракансене пурне те пырса тиврĕ. Кунпа пĕрлех ĕç выслугине (инвалидноçа) пула илсе тăракан пенсисемпе пĕрлех ĕç пенсийĕн страхланă пайне те тивĕçекен вăй ведомствисен пенсионерĕсене те.

Çавна та каласа хăвармалла. Енчен те ĕçлекен пенсионер 2009 çулхи июль уйăхĕччен пенси виçине çĕнĕрен шутлаттарасси пирки Пенси фондне пыман пулсан, вĕсен пенсийĕсене те çĕнĕрен шутласа параççĕ, кайран вара индексаци 1,075 виçепе пулĕ.

Пенсисен çĕнĕ виçисене асăннă майпа çĕнĕрен шутласа палăртасси 2009 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче йышăннă 142-ФЗ № Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн пулса иртет. Малашне кашни çулах августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса заявлени памасăрах пенси илсе тăраканăн счечĕ çине страховани взносĕсем мĕн чухлĕ куçни пирки Пенси фондĕнчи даннăйсене кура е пенси виçине юлашки хут çĕнĕрен шутласа панă хыççăнхи кăтартусемпе корректировка туса параççĕ. Унччен пенсисен çĕнĕ виçине пенсионер çырса панă заявление кура 12 уйăхран кая юлмасăр шутласа панă пулнă. Кунпа пĕрлех пенсионер заявлени çырса панине кура пенси виçине çĕнĕрен шутласа парассин йĕркине те сыхласа хăварнă.

Пирĕн районта ĕç пенсийĕсем августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса вăтамран 146 тенкĕ ӳсрĕç, 4440 тенкĕпе танлашрĕç. Вăл шутран ватлăха пула паракан пенсисем вăтамран 152 тенкĕ ӳсрĕç, инвалидноçа пула паракан пенсисем – 92 тенкĕ, çемьери тăрантаракан вилнине пула паракан пенсисем – 124 тенкĕ. Çапла вара районĕпе вăтамран уйăхне пенсисем тӳлесе тăма каякан укçа-тенкĕ виçи 1,3 миллион тенкĕ чухлĕ ӳсрĕ.

Тепĕр хут пенсисен виçисене декабрĕн 1-мĕшĕнче ӳстерме палăртнă. Ĕç пенсийĕсен база пайне 31,4 процентпа индексацилĕç. Апла пулсан 2009 çул хушшинче пенсисен виçисене 4 хутчен çĕнĕрен шутласа парĕç. Çулталăк вĕçленнĕ тĕле ĕç пенсийĕсен уйăхри вăтам виçи 5638 тенкĕпе танлашмалла, социаллă пенсисен вăтам виçи пенсионерсен пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçине çитет, 3751 тенкĕпе танлашать.

**Е. АЛЕКСАНДРОВА,**
**Пенси фончĕн районти управленийĕн ертӳçи.**

Шкултан вĕренсе тухнисене пĕлме

# Ăçта вĕренме каймалла?



***Асăннă ыйту халĕ шкулсенчен вĕренсе тухнисенчен чылайăшне шухăшлаттарать. Тĕрĕс професси суйласа илесси, хыççăн вара чуна килĕшекен ĕç тупса ĕçлесе пурăнасси кирек камшăн та пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Ку енĕпе сире «Кӳкеç поселокĕнчи 27-мĕш номерлĕ професси училищи» пуçламăш вĕрентĕвĕн республика патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ пулăшма пултарĕ. Çавăн пирки каласа пама пулчĕ унăн директорĕ Станислав Порфирьевич ГРИГОРЬЕВ.***

**– Станислав Порфирьевич, хальхи вăхăтра ял хуçалăх предприятийĕсенчен нумайăшĕ арканса пĕтрĕç пулин те, ял хуçалăх производствин специалисчĕсен кадрĕсем тĕлĕшпе ыйту çивĕчлĕхĕ чакмасть. Вĕсем ял хуçалăхĕнче кирек хăçан та кирлĕ. Хăвăрăн вĕрентӳ учрежденийĕ пирки мĕн калас тетĕр?**

– Пирĕн патра ял хуçалăхĕнче кăна мар, ытти çĕрте те кирлĕ профессисене вĕрентсе хатĕрлетпĕр. 11 класс кăна мар, 9 класс вĕренсе пĕтернисем те професси илме пултараççĕ.

**– Мĕнле профессисем пирки сăмах пырать-ха?**

– Акă 9 класс вĕренсе пĕтернисене ял хуçалăх производствин тракторист-машинистне вĕренме йышăнатпăр. Кунта «В» тата «С» категориллĕ автотранспорт водителĕсене, ял хуçалăх производствин тракторист-машинисчĕсене («В», «С», «Д», «Е», «F» категорисем), ял хуçалăх машинисене тата оборудованисене юсакан слесарьсене хатĕрлетпĕр.

9 класс пĕтернисен машинăпа трактор паркне техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăракан тата юсакан маçтăрăн профессине те илме май пур. Ку профессипе автотранспорт водителĕсене, ял хуçалăх производствин тракторист-машинисчĕсене («В», «С», «Д», «Е», «F» категорисем), ял хуçалăх машинисене тата оборудованисене юсакан слесарьсене вĕрентсе хатĕрлетпĕр.

9 тата 11 класс пĕтернисем автомеханика вĕренме пултараççĕ. Ку енĕпе пĕлӳ пухакансем «В» тата «С» категориллĕ автотранспорт хатĕрĕсен водителĕн, автотранспорт хатĕрĕсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăракан слесарĕн профессине алла илĕç.

9 класс пĕтернисен 3 çул, 11 класс вĕреннисен 1 çул вĕренмелле пулать.

Кунпа пĕрлех тĕрлĕ профессисене кĕске вăхăтлăх курспа та вĕренсе тухма пулать. Акă водителе, тракторист-машиниста 3 уйăхра вĕренме май пур.

Çавна та каласа хăварасшăн. Пирĕн пата пĕлтĕр 1-мĕш курса 75 ача вĕренме йышăннă пулсан, кăçал вĕсем 125 пулаççĕ.

**– Вĕренме кĕрес текенсен мĕнле документсем тăратмалли пирки те ыйтса пĕлес килет.**

– Йĕркесем ытти çĕрти пекех. Училищĕне вĕренме кĕрес шухăшлисен директор ячĕпе суйласа илнĕ профессие кăтартса заявлени çырас пулать, вĕренни çинчен панă документ (аттестат) пулмалла, 086/4 формăллă медицина справки, çемье йышĕ пирки справка, 3х4 см. калăпăшлă 4 сăн ӳкерчĕк, çурални çинчен панă свидетельство, вĕреннĕ çĕртен панă характеристика кирлĕ.

**– Хальхи вăхăтра ытларах çĕрте вĕрентӳ тӳлевлĕ...**

– Пирĕн патра вĕренекенсем вĕренӳшĕн тӳлемеççĕ кăна мар, вĕсене эпир стипенди те паратпăр, тӳлевсĕр апатлантаратпăр, çăмăллатнă мелпе çул çинче çӳремелли билетсемпе тивĕçтеретпĕр, кирлисене вара общежити уйăрса паратпăр.

**– Специалистсем хатĕрленипе пĕрлех вĕсем валли ĕç вырăнĕсем янтăлани, предприятисемпе çыхăнса ĕçлени те пысăк пĕлтерĕшлĕ.**

– Юлашки вăхăтра чăннипех те ял хуçалăх предприятийĕсемпе уйрăмах тачă çыхăнса ĕçлеме тăрăшатпăр. Предприятисемпе килĕшӳсем туса тĕрлĕ ял хуçалăх ĕçĕсене туса ирттерме техника та уйăрса паратпăр. Пирĕн сажалкăсемпе копалкăсем кăна мар, тата ытти ятарлă техника хатĕрĕсем те пур. Кунпа пĕрлех производство практикине ирттерме вĕренекенсем хăйсем суйласа илнĕ хуçалăхсене кайма пултараççĕ.

**– Шкулсемпе çыхăну мĕнлерех пулса пырать?**

– Шăпах пирĕн шкулсемпе тачăрах ĕçлесе пымалла та ĕнтĕ. Пирĕн пата вĕренме пыракансем те – çак çулсенче шкулсенчен вĕренсе тухакансем. Çавăнпа та вĕсемпе пуринпе те тачă çыхăну тытма тăрăшатпăр, училищĕне вĕренме кĕмелли йĕркепе тата условисемпе пĕлтерсех тăратпăр. Кунпа пĕрлех хăшпĕр база шкулĕсенче пирĕн патри профессисене вĕрентессине йĕркеленĕ. Апла пулсан вырăнтах ял хуçалăх профессине илме пулать.

**– Станислав Порфирьевич, вĕренӳ çулĕ пуçланиччен вăхăт нумаях юлмасть. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче ăнăçу сунатăп сире. Ял хуçалăхĕ валли ăста кадрсем ытларах пулччăр. Юлашкинчен хăвăрăн вĕрентӳ учрежденийĕн адресне тепĕр хут аса илтерсе хăварсамăр.**

– Пирĕн адрес çапла: Шупашкар районĕ, Кӳкеç поселокĕ, Первомайская урам, 20-мĕш çурт. Тел.: (8-83540) 2–15-94, 2–25–31.

Училище патне 153-мĕш номерлĕ автобуспа тата 102-мĕшпе 162-мĕш номерсемлĕ маршруткăсемпе (юлашки чарăну) çитме май пур.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

Паян – Физкультурниксен кунĕ

# Ялти спорт клубĕн çитĕнĕвĕсем

«Герой» хуçалăхри Шуркассипе Вăрăмой ялĕсенчи «Атлант-Т» спорт клубне йĕркелени тăваттăмĕш çул. Çак тапхăрта клуб канашĕ ĕç планĕпе килĕшӳллĕн ялта хĕллехи тата çуллахи спорт ăмăртăвĕсене ирттерессине йăлана кĕртсе çитерчĕ. Чи пултаруллисене районти тата республикăри ăмăртусене хутшăнма майсем те туса парать клуб канашĕ.

Икĕ çул хушши хастар яшсемпе хĕрсем çăмăл атлетика, йĕлтĕр спорчĕ, кире пуканне йăтасси, армспорт енĕпе районта Шурча шкулĕн чысне, республикăра Муркаш районĕн чысне хӳтĕлерĕç. Чăваш Республикин армспортăн пĕрлештернĕ командине М. Шурнова кĕрет. Вăл республикăри çамрăк спортсменсен ăмăртăвĕнче иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Патăрьелте, Кӳкеçре, Шупашкарта иртнĕ турнирсенче яланах призлă вырăнсенче пулчĕ. Спортăн çак енĕпе тата кире пуканĕ йăтассипе А. Соловьев та ăнăçлă ăмăртать. Муркашра иртнĕ республикăри хĕллехи спорт вăййисенче йывăр виçеллĕ категорире виççĕмĕш вырăна тухма пултарчĕ, район командишĕн сахал мар очко выляса илчĕ.

Йĕлтĕрпе чупассипе Т. Иванова, çăмăл атлетикăра К. Соловьева, велосипедпа чупассипе Н. Антонова, роликла конькипе чупассипе Р. Соловьева республика шайĕнче лайăх ăмăртаççĕ. Вĕсене кура 6-7 классенче вĕренекенсем те спорт пурнăçне хаваспах хутшăнаççĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче А. Михайлов пăшалтан перессипе, Т. Шурнова тата М. Иванова чупакансем хушшинче районти çĕнтерӳçĕсен ретĕнче пулчĕç.

Çамрăк спортсменсене ăсталăха туптама А.Г. Андриянов, В.Л. Михайлов, И.В. Смоленцев спорт ветеранĕсем пулăшса пыраççĕ. Спортшăн каникул çук. Çавăнпах тренировкăсене кашни кун ирттерме тăрăшаççĕ çамрăксем. Çĕнĕ çĕнтерӳсем пуласса шанса тăраççĕ.

**С. ИВАНОВ,**
**спорт ветеранĕ.**



**Сăн ӳкерчĕкре: М. Шурнова (сулахайри) ăмăрту вăхăтĕнче.**

# Ачаранах спорта юратма вĕрентесчĕ

Районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ ял тăрăхĕсемпе тата физкультурăпа спорт организацийĕсемпе пĕрле çынсем хушшинче спорта сарассипе тата сывă пурнăç йĕркине пропагандăлассипе тачă çыхăнса ĕçлесе пырать. Кăçалхи çул Çамрăксен çулталăкĕ пулнă май, ирттернĕ мероприятисенчен ытларахăшне ачасемпе çамрăксене явăçтарнă. Кунпа пĕрлех ытти категорисене те тимлĕхсĕр хăварман.

Районти 26 спортзал, 7 тир, 1 йĕлтĕр бази, «Сывлăх» ФСК тата 95 тӳрем спорт сооруженийĕсемпе площадкăсем çак ĕçе туса пыма май параççĕ. Кашни çулах районта спортăн тăхăр енĕпе шкул ачисен спартакиади иртет. Ĕçлекен коллективсем хушшинче вара – 12 енпе.

2008-2009 вĕренӳ çулĕнче районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн 10 филиалĕнче 8 тренер-преподаватель тата 9 совместитель вăй хучĕ. Йĕлтĕр спорчĕпе, çăмăл атлетикăпа, ирĕклĕ майпа кĕрешессипе, вĕлейболла выляссипе тата бокспа пурĕ 452 вĕренекен хăйсен ăсталăхне туптарĕ. Уйрăмах йĕлтĕрçĕсен кăтартăвĕсем савăнтараççĕ. А. Костинапа (Ярапайкассинчи вăтам шкул, тренерĕ Э. Гордеев) Д. Замятина (Калайкассинчи вăтам шкул, тренерĕ А. Дашкова) кăçал республикăн пĕрлештернĕ командине кĕме пултарчĕç. С. Васильев та (тренерĕ В. Моисеев) Раççей шайĕнчи ăмăртăва хутшăнма пултарчĕ.

Бокс енĕпе те çитĕнӳсем çук мар. Районти боксерсем 15 турнирта ăмăртса кашнинчех призлă вырăнсем йышăнчĕç. Самбо тата дзюдо енĕпе те республика шайĕнчи малти вырăнсем пур. Волейболла вылякансен команди вара ЧР Президенчĕн Кубокне çĕнсе илессинче иккĕмĕш пулчĕ.

Калас пулать, çак тапхăрта пурĕ 13 çамрăк спортсмен спортăн 1-мĕш разрядне, 20 спортсмен 2-мĕш разрядне, 8 спортсмен 3-мĕш разрядне пурнăçлама пултарчĕ.

Паянхи кун хăш-пĕр спортсменсем хăйсен ăсталăхне Олимп резервĕсен училищинче малалла аталантараççĕ. Хальлĕхе районти 7 воспитанник республикăн пĕрлештернĕ командинче шутланса тăрать.

Вĕренекенсен кăтартăвĕсем тренерсем мĕнле ĕçлесе пынипе тӳрремĕнех çыхăннă. Çавăнпа та тренерсем те тăтăшах хăйсен квалификацине ӳстерессипе тимлеççĕ, хăйсен вĕренекенĕсене спорта юратма, сывă пурнăç йĕркине тĕпе хурса пурăнма хăнăхтараççĕ.

**Н. ИВАНОВА,**
**районти вĕрентӳ пайĕн методисчĕ.**

# Кадетсене «Тӳсĕмлĕх шкулĕнче» тĕрĕслеççĕ



Июлĕн 21-31-мĕшĕсенче Муркаш лицейĕнчи кадетсем Атăл леш енчи сывлăха çирĕплетмелли «Парус» центрта пурăнчĕç. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ вĕсем «Неприкосновенный запас – дети Отчизны» проекта хутшăнаççĕ. «Тӳсĕмлĕх шкулĕ» курсра тĕрлĕ йывăрлăхсене çĕнтерме пултарнине кăçал та пирĕн кадетсем аван кăтартусемпе çирĕплетрĕç.

Çамрăк спецназовецсен курсĕн чи ответлă саманчĕ вăл – свидетельство тата ятарлă жетон илме зачет парасси. Çак жетонсемшĕн тупăшма конкурса хутшăннă 28 кадетран 18-ăшне суйласа илчĕç. Выляттарнă 6 жетонран тăваттăшĕ Муркаш кадечĕсен аллинче пулчĕ, тепĕр иккĕшĕ – Шупашкарсенче. Александр Чернов, Алексей Григорьев, Роза Андреева, Мария Салтыкова тивĕçрĕç вĕсене. Çĕнтерӳçĕ пулма пирĕн лицеистсене район тата республика шайĕнчи «Орленок» вăйăсем те пулăшрĕç темелле. Унта та кадетсем призлă вырăнсем йышăннăччĕ.

Иртнĕ иккĕмĕш сменăра пулнă тăватă уйрăм командирĕсем те пурте Муркашсем пулчĕç: А. Чернов, Е. Антонова, А. Николаева тата Р. Андреева. Виççĕмĕш сменăра хăйсене тĕрĕслеме тата тепĕр 4 кадет кăмăл турĕ.

**В. ФЕДОРОВ.**